25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942
ИЮНЬ
12
ЭРНЕКУН
135(6070) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

МТС-сен, МТМ-сен тата СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн моторсем юсакан завочӗсен Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн

УСЛОВИЙӖСЕМ

Куйбышев облаҫӗнчи Больше-Раковски МТС трактористӗсем, трактористкисем, комбайнерӗсем, комбайнеркисем, специалисчӗсем, служащийӗсемпе руководителӗсем, Оборона Халӑх Комиссарӗн Сталин юлташӑн майӑн 1-мӗшӗнчи приказӗ ҫине ответлесе, машинно-тракторнӑй станцисен, машинно-тракторнӑй мастерскойсен тата моторсем юсакан заводсен мӗнпур работникӗсене колхозсен уйхирӗсенче пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илессишӗн, машинӑсен тата тракторсен паркӗпе тухӑҫлӑнрах усӑ курассишӗн, нефтепродуктсене перекетлессишӗн Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва сарса яма чӗнсе каларӗҫ.

Больше-Раковски машинно-тракторнӑй станци работникӗсен пуҫарӑвне ырласа, Профессиллӗ Союзсен Пӗтӗм Союзри Центральный Совечӗ, СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ тата СССР Наркомземӗн Политикӑллӑ Управленийӗ машинно-тракторнӑй станцисен, моторсем юсакан заводсен тата машинно-тракторнӑй мастерскойсен Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн ҫакӑн пек условийӗсене пӗлтереҫҫӗ:

Машинно-тракторнӑй станцисем енӗпе.

Ӑмӑртура ҫак ӗҫсене тунӑ МТС-сем мала тухнӑ тесе шутланаҫҫӗ:

1. Колхозсемпе тунӑ договорта палӑртса хунӑ уйхир ӗҫӗсене (ҫурхи суха ӗҫӗ, сӳрелесси, ҫурхи ака ӗҫӗ, ҫӗртме тӑвасси, культиваци, тырпулсене пухса кӗртесси, кӗраки, кӗрхи ҫӗртме) кӑтартнӑ срокра ирттерсе тултарнӑ пулсан, ҫапла майпа тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерес тӗлӗшпе государство панӑ плана ирттерсе тултарма колхозсене пулӑшнӑ пулсан, МТС ӗҫӗсемшӗн натурӑпа тата укҫан памалли парӑмсене колхозсем вӑхӑтра парса татмалла тунӑ пулсан.

2. Тракторсемпе тумалли ӗҫсен государственнӑй планне тата тракторпа сезонра ӗҫлемелли нормӑна ирттерсе тултарнӑ пулсан.

3. Трактор ӗҫӗсен хӑйне ларакан хакне 5 процентран кая мар чакарнӑ пулсан.

4. Ремонт ӗҫӗсене, тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисене пӑхса тӑрас ӗҫе пурнӑҫа кӗртнӗ пулсан, запаслӑ пайсем туса кӑлармалли тата киввисене юсамалли плана тултарнӑ, ялхуҫалӑх сезонӗ пӗтнӗ хыҫҫӑн машинӑсен паркне лайӑх тытса усранӑ пулсан.

5. Нефтепродуктсене 10 процентран кая мар тата ремонт тума панӑ средствӑсене 10 процент перекетлесе хӑварнӑ пулсан.

Машинно-тракторнӑй мастерскойсем енӗпе.

Ӑмӑртура ҫак ӗҫсене тунӑ МТМ-сем мала тухнӑ тесе шутланаҫҫӗ:

1. Трактӑрсен, автомобильсен тата комбайнсен моторӗсене тата тракторсене юсамалли плана МТС-семпе тунӑ договорта кӑтартнӑ сроксенче пурнӑҫа кӗртнӗ пулсан, ремонт пахалӑхӗ лайӑх пулсан тата тунӑ ӗҫсен хӑйне ларакан хакӗ планпа кӑтартнинчен иртмест пулсан.

2. Тракторсем, комбайнсем, ялхуҫалӑх машинисем валли ҫӗнӗ запаслӑ пайсем хатӗрлемелли тата киввисене юсамалли плана палӑртнӑ срокра ирттерсе тултарнӑ пулсан, вӗсен хӑйне ларакан хакӗ планпа кӑтартнинчен иртмест пулсан.

3. Метала, топливӑна тата ремонт тума панӑ средствӑсене перекетлесе хӑварнӑ пулсан.

Мотор юсакан заводсем енӗпе.

Ӑмӑртура ҫак ӗҫсене тунӑ заводсем мала тухнӑ тесе шутланаҫҫӗ:

1. Тракторсем, комбайнсем тата ялхуҫалӑх машинисем валли запаслӑ пайсене туса кӑлармалли плана кӑтартнӑ срокра ирттерсе тултарнӑ пулсан, вӗсене номенклатура тӑрӑх тата лайӑх пахалӑхпа туса кӑларнӑ пулсан, комбайнсен, автомобильсен тата тракторсен моторӗсене юсамалли задание ытлашшипех пурнӑҫа кӗртнӗ пулсан, вӗсен хӑйне ларакан хакӗ планпа кӑтартнинчен иртмест пулсан.

2. Металпа топливӑна перекетлесе хӑварнӑ пулсан.

Облаҫсем, крайсем тата республикӑсем енӗпе.

Тракторпа тумалли ӗҫсен государственнӑй планне ирттерсе тултаракан, горючисене тата ремонт тума панӑ средствӑсене перекетлесе хӑваракан, тракторсене, комбайнсене, ялхуҫалӑх машинисене лайӑх пахалӑхпа юсас тата пӑхса тӑрас ӗҫе пурнӑҫа кӗртекен, вӗсене лайӑх сыхласа усракан, МТС ӗҫӗсемшӗн натурӑпа тата укҫан тӳлемелли плана пурнӑҫа кӗртекен облаҫсем, крайсем тата республикӑсем социализмлӑ ӑмӑртура мала тухнӑ тесе шутланаҫҫӗ.

* * *

Социализмлӑ ӑмӑртура мала тухнӑ МТС-сене, МТМ-сене тата моторсем юсакан заводсене ҫакӑн пек ятсем параҫҫӗ:

«Совет Союзӗнчи чи лайӑх МТС».

«Совет Союзӗнчи чи лайӑх МТМ».

«Совет Союзӗнчи моторсем юсакан чи лайӑх завод».

Ӑмӑртура мала тухнӑ облаҫа, края, республикӑна (облисполкома, крайисполкома, республика Совнаркомне), Оборонӑн Государственный Комитечӗ йышӑннӑ тӑрӑх, Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне параҫҫӗ тата ӗҫре палӑрнӑ трактористсене, трактористкӑсене, комбайнерсене, комбайнеркӑсене, бригадирсене, специалистсене, служащисене, МТС-сен, районсен, облаҫӑн, крайӑн тата республикӑн ертсе пыракан работникӗсене премилеме укҫа параҫҫӗ. Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне облисполком, крайисполком тата республика Совнаркомӗ ССР Союзӗнчи чи лайӑх машинно-тракторнӑй станцине парать.

Оборонӑн Государственный Комитечӗн Хӗрлӗ Ялавне илекен машинно-тракторнӑй станцине укҫан премипараҫҫӗ.

Ӑмӑртура мала тухнӑ машинно-тракторнӑй станцисене, машинно-тракторнӑй мастерскойсене тата моторсем юсакан заводсене Профессиллӗ Союзсен Пӗтӗм Союзри Центральный Совечӗн тата СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне параҫҫӗ.

Ӑмӑрту условийӗсене пурнӑҫа кӗртнӗ МТС-сем, МТМ-сем валли, моторсем юсакан заводсем валли ӗҫре палӑрнӑ работниксене премилеме тата культурӑпа йӑла мероприятийӗсене туса ирттерме укҫан ҫакӑн пек премисем параҫҫӗ:

Машинно-тракторнӑй станцисем валли:

Пӗрремӗш премисем — 5,
Иккӗмӗш премисем — 15,
Виҫҫӗмӗш премисем — 25.

Машинно-тракторнӑй мастерскойсем валли:

Пӗрремӗш премисем — 2,
Иккӗмӗш премисем — 5,
Виҫҫӗмӗш премисем — 8.

Моторсем юсакан заводсем валли:

Пӗрремӗш премисем — 1,
Иккӗмӗш премисем — 2.

МТС-сен, МТМ-сен тата моторсем юсакан заводсен ӑмӑртӑвӗнче малта пыракансене «Социализмлӑ ялхуҫалӑхӗн отличникӗ» значок парса наградӑлаҫҫӗ. Значок парассине облаҫри, крайри ҫӗрӗҫ отделӗсем тата республикӑсен Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗсем тӑратнипе СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗн приказӗ тӑрӑх туса ирттереҫҫӗ.

МТС-сен чи лайӑх бригадисене, МТМ-семпе ремонт тӑвакан заводсен чи лайӑх цехӗсене облаҫри, крайри ҫӗрӗҫ отделӗсем тата республикӑсенчи Наркомземсем тӑратнӑ тӑрӑх «СССР Наркомземӗн Хисеп грамотипе» наградӑлаҫҫӗ.

МТМ-семпе заводсем тӑрӑх ӑмӑртӑвӑн малтанхи итогӗсене ВЦСПС-па СССР Наркомземӗ кашни уйӑхрах 20-мӗш числаран кая юлмасӑр тӑваҫҫӗ, МТС-сем, облаҫсем, крайсем тата республикӑсем тӑрӑх ҫулталӑкра икӗ хут тӑваҫҫӗ: малтанхи хут — ҫураки ӗҫӗсене вӗҫленӗ хыҫҫӑн тата иккӗмӗш хут — тырпулсене пухса кӗртнӗ, кӗр тыррисене акнӑ тата кӗрхи ҫӗртме тунӑ хыҫҫӑн тӑваҫҫӗ. Татӑклӑ итогсене хуҫалӑх ҫулӗн вӗҫӗнче, анчах 1943 ҫулти февралӗн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр тӑваҫҫӗ.

Ӑмӑрту результачӗсене центрти тата вырӑнти хаҫатсенче пичетлесе кӑлараҫҫӗ.

* * *

Профессиллӗ Союзсен Пӗтӗм Союзри Центральный Совечӗ, СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ тата СССР Наркомземӗн Политикӑллӑ Управленийӗ МТС-сен, МТМ-семпе заводсен руководителӗсене, МТС политотделӗсене, МТС-семпе ремонт тӑвакан предприятисенчи профессиллӗ организацисене производство программине ирттерсе тултарасишӗн, ҫапла вара нимӗҫ захватчикӗсене хӑвӑртрах ҫӗмӗрсе тӗкме паттӑр Хӗрлӗ Ҫара пулӑшассишӗн пыракан социализмлӑ ӑмӑртӑва пуҫарса ертсе пыма чӗне[illegible]

Самолетсен „Осоавиахим Чувашии“ звенине тума

ШАХАСАН. Ҫар ӗҫне вӗренекенсен Атнашри подразделенийӗнчи комсомолецсем 1.240 тенкӗ пухрӗҫ. Политрук П. Якимов 200 тенкӗ пачӗ, взвод командирӗсем Иванов, Елаков 20—30 тенкӗ, кашни боец 10—15 тенкӗшер пачӗҫ.

ВКП(б) райкомӗнче ӗҫлекенсем самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине тума 200 тенкӗ пухса панӑ.

С. ШАДИН.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июнӗн 10-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Июнӗн 10-мӗшӗнче фронтӑн **Харьков** участокӗнче наступлени тума тытӑннӑ нимӗҫсен фашистла войскисене хирӗҫ ҫапӑҫусем пуҫланса кайнӑ.

Фронтӑн **Севастополь** участокӗнче ҫаплах ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Пирӗн войскӑсем противникӑн атакисене сирсе-сирсе янӑ, противника пысӑк ҫухатусем кӳнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Июнӗн 9-мӗшӗнче пирӗн авиацин чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен темиҫе танкӗпе бронемашинине, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 300 автомашинине, боеприпассем тиенӗ 30 лавне, 18 полевой тата зенитнӑй орудине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, чугунҫул ҫинчи 2 состава ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, пӗр ангара ҫунтарса янӑ, хуралта ҫӳрекен карапа путарнӑ, противникӑн пехотине 2 ротӑна ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче нимӗҫсем пехотӑн пӗр полкне ҫити хайпа пирӗн позицисем ҫине наступлени тума тытӑннӑ. Артиллерирен, пулеметсемпе пӑшалсенчен персе, пирӗн войскӑсем противникӑн атакине сирсе янӑ. Хӑйӗн салтакӗсемпе офицерӗсене 500 ҫынна ытла ҫухатнӑ хыҫҫӑн нимӗҫсем хӑйсен малтанхи позицийӗсем ҫине чакнӑ. Тепӗр участокра пирӗн артиллеристсем противникӑн артиллерин 2 батарейине тата миномётсен 2 батарейине пусарса лартнӑ, 5 блиндажа ҫӗмӗрнӗ тата противникӑн пехотине пӗр батальона ҫити сапаласа янӑ.

* * *

Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть нимӗҫсенчен 4 станковӑй тата 2 ручной пулемет, 6 миномет, вӗсемпе пӗрлех 850 мина, радиостанци, телефон аппарачӗсем тата ытти тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗсем тытса илнӗ. Противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 200 ҫынна ҫити вӗлерсе тӑкнӑ.

* * *

Калинин фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен чаҫӑн артиллерисчӗсем пӗр уйӑх хушшинче противникӑн артиллерин 18 батарейине тата минометсен 10 батарейине пусарса лартнӑ. 32 пулемет, танксене хирӗҫ пемелли 3 оруди пӗтерсе тӑкнӑ, 15 дзот тата 16 блиндаж, вӗсенче вырнаҫса ларнӑ нимӗҫ салтакӗсемпе пӗрлех, ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Пирӗн артиллери вутӗнчен гитлеровецсен 850 салтакӗпе офицерӗ пӗтнӗ.

* * *

Агапов лейтенантӑн танк экипажӗ нимӗҫсен 3 дзотне, 2 орудине тата боеприпассен складне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

3-мӗш рангри военврач Белов юлташ противник пулеметсемпе минометсенчен вӑйлӑн персе тӑнине пӑхмасӑрах аманнӑ 12 боецӑн суранӗсене ҫыхнӑ, вӗсене пурне те ҫапӑҫу хирӗнчен вӗсен хӗҫпӑшалӗсемпе пӗрлех илсе тухнӑ.

* * *

Нимӗҫсен 77-мӗш эскадрин 1-мӗш группинчи 3-мӗш отрядран тыткӑна лекнӗ «Юнкерс—88» йышши самолетӑн летчик-водителӗ обер-фельдфебель Иоганн Эйбль ҫапла каласа панӑ: «Германин ҫарӗ тата унӑн авиацийӗ халӗ пӗлтӗрхи ҫуллахинчен чылаях начар. Эпир ҫавтери пысӑк ҫухатусем тӳсрӗмӗр. Пирӗн отрядра 9 самолетран 2 кӑна тӑрса юлчӗҫ. Отряд 16 ҫын ҫухатрӗ. Ку шута аманнисем тата стройран тухнисем кӗмеҫҫӗ. Опытлӑ летчиксем сахалланнӑҫемӗн сахалланса пыраҫҫӗ. Ҫамрӑк пилотсене васкаса кӑна вӗрентнӗ, ҫавӑнпа та вӗсем хӑйсен ӗҫне питех те начар пӗлеҫҫӗ».

* * *

Нимӗҫсен Петр Штраух обер-ефрейторӗ Адольф Грау ятлӑ унтер-офицер патне ҫапла ҫырать: «Пирӗн ротӑран пӗчӗк группа кӑна тӑрса юлчӗ. Унтер-офицер Шауфен, унтер-офицер Банкерман, Эди Вернер, Артур Лизке, Фольман, Тимике, Гофман, Шмиц вилнӗ. Эпӗ вӗсене пурне те ҫырса тухма астуса та ҫитерейместӗп. Пирӗн нервсем кунта мӗн тери пӑсӑлса кайнине эсӗ пӗлме те пултараймастӑн».

* * *

Германири тата Германия оккупациленӗ ҫӗршывсенчи хуласем Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтӗнчен аманса е чирлесе таврӑннӑ салтаксемпе тулса ларнӑ. Ҫар влаҫӗсем гостиницӑсенчен, монастырьсенчен, театрсенчен тата пурӑнмалли нумай ҫуртсенчен те госпитальсем тунӑ, анчах ҫапах та аманнӑ салтаксем валли вырӑн ҫитмест. Требниц хулинче (Германия) ачасен приютӗнчен, католиксен тӑлӑх-туратсем пурӑнмалли ҫуртӗнчен, богадельнӑран, монастырьтен тата ытти ҫуртсенчен те лазаретсем туса хунӑ. Палатӑсем пурте туп-тулли тулса ларнӑ. Аманнӑ салтаксене тем чухлех уйрӑм граждӑнсен хваттерӗсене ирӗксӗр йӗркепе вырнаҫтарса тухнӑ. Апатҫимӗҫ ытла та начаррипе тата медицина пулӑшӑвӗ ҫуккипе аманнӑ салтаксем ҫав тери нумай вилеҫҫӗ. Вырӑнти ҫынсем нумай лазаретсене вилме хатӗрленекенсен ҫуртӗ тесе ят панӑ.

* * *

Советлӑ Социализмлӑ Казах Республикинчи колхозсем ҫурхи акан государство планне пурнӑҫа кӗртнӗ. Пӗлтӗр ку вӑхӑтчен акнӑ шутран 600 пин гектар ытларах акнӑ. Каучук курӑкне акмалли плана 131 процент тултарнӑ, сахӑр кӑшманӗн плантацийӗсене пӗлтӗрхинчен 3 хут ытларах аслӑлатнӑ, хӗвелҫаврӑнӑш пӗлтӗрхинчен 30 пин гектар ытларах акнӑ, ҫӗрулми тата тӗрлӗрен пахча-ҫимӗҫсем лартнӑ лаптӑксене те аслӑлатнӑ.

Республикӑри малта пыракан колхозсем тӑван ҫӗршыв оборонин фондне хывма 25 пин гектар ытла акнӑ.

Июнӗн 11-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Июнӗн 11-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле фронтра паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче нимӗҫсен пехоти пирӗн войскӑсем тӑракан ҫӗре савӑлланса кӗме хӑтланнӑ. Вӑйлӑн ҫапӑҫса, противника аркатса тӑкнӑ, унӑн юлашкийӗсене хӑйсен малтанхи позицийӗсем ҫине хӑваласа янӑ. Ҫапӑҫу пулнӑ вырӑнта гитлеровецсен 200 вилли ытла выртса юлнӑ. Пирӗн боецсем 5 пулемет, танксене хирӗҫ пемелли 5 пӑшал, 8 миномет тата боеприпассем нумай тытса илнӗ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗнче противникӑн тылӗнче кӗрешекен пирӗн часть, нимӗҫсен гарнизонӗ хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, халӑх пурӑнакан пункта йышӑнса илнӗ. Ял патне пымалли вырӑнсенче тата ялӑн урамӗсенче тӑшманӑн ҫӗршер вилли тата нимӗҫсем пӑрахса хӑварнӑ хӗҫпӑшалсем выртса юлнӑ.

* * *

Бычиков юлташ командир пулса тӑракан чаҫӑн артиллерисчӗсем нимӗҫсен орудийӗсем тата боеприпассен склачӗсем ӑҫта вырӑнаҫса тӑнине пӗлнӗ. Сасартӑк пеме тытӑнса, 7 йывӑр орудие тата боеприпассен 6 складне пӗтерсе тӑкнӑ. Взрывсем виҫӗ сехет хушши илтӗнсе тӑнӑ.

* * *

Летчиксем — старши лейтенантсем Гапоновпа Волошин, лейтенантсем Зудиловпа Руденко, старшина Богатов, Чувинпа Косенко юлташсен истребителӗсем хӳтӗлесе пынипе, нимӗҫсен войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 55 автомашинине, 30 лавне, витнӗ

Вӗҫӗ 2-мӗш страницӑра

Хӗрлӗ Ҫарӑн санитари енӗпе ӗҫлекен работникӗсене орденсем тата медальсем парса наградӑлани

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче войскӑсен боевой ӗҫӗсене медицинӑпа санитари енӗпе кирлӗ таран пулӑшса пыма Правительство панӑ заданисене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн СССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ тӑрӑх наградӑланӑ:

Ленин орденӗпе — бригврача Н. Н. Гинсбурга, 1-мӗш рангри военврача А. С. Груденкова, 1-мӗш рангри военврача Н. Ф. Копылова, 1-мӗш рангри военинженера Р. В. Корнеева, бригврача М. М. Файбича, 2-мӗш рангри военврача И. А. Чалисова.

Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗпе 9 ҫынна,

Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе — 13 ҫынна,

«За трудовую доблесть» медальпе 25 ҫынна наградӑланӑ. (ТАСС).

Финанс органӗсенче ӗҫлекен работниксене орденсем тата медальсем парса наградӑлани

Тӑван ҫӗршыв оборони валли укҫатенкӗ парса тӑрас тӗлӗшпе Правительство панӑ заданисене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн СССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ тӑрӑх финанс органӗсенче ӗҫлекен работниксене наградӑланӑ:

Ленин орденӗпе — СССР Финанс Халӑх Комиссарӗн заместительне Я. И. Голева, Финанс Халӑх Комиссарне А. Г. Зверева, РСФСР Финанс Халӑх Комиссарне А. А. Посконова т. ыт. те, мӗнпурӗ 6 ҫынна.

Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗпе 48 ҫынна,

«Знак почета» орденӗпе — 82 ҫынна,

«За трудовую доблесть» медальпе — 115 ҫынна,

«За трудовое отличие» медальпе 132 ҫынна наградӑланӑ. (ТАСС).

ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн хӗрарӑмсен трактор бригадисемпе хӗрарӑм-трактористкӑсен ӑмӑртӑвне ертсе пыма тунӑ комиссийӗ тӑратнӑ тӑрӑх, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми ҫине кӗртнӗ:

99. Кувакино МТС-ӗнчи **хӗрарӑмсен 4-мӗш номерлӗ трактор бригади** (бригадирӗ **Балденкова** юлташ). Бригада ҫуракинче планра кӑтартса панӑ 550 гектар вырӑнне 806 гектар сухаланӑ, ҫурхи ӗҫсен планне 146 243,3 процент тултарнӑ, 310 килограмм горючи перекетленӗ.

100. **Мария Соловьева** — Комсомольски МТС-ри трактористка. Тракторпа пӗрремӗш ҫул ӗҫлет. СТЗ-НАТИ маркӑллӑ тракторпа ӗҫлесе, вӑл ҫуракинче 140 гектар сухаланӑ, плана 122 процент тултарнӑ.

101 **Т. Спиридонова** — Вӑрмар МТС-ӗнчи трактористка. Вӑл, СТЗ маркӑллӑ тракторпа ӗҫлесе, ҫуракинче 146 гектар сухаланӑ, плана 243,3 процент тултарнӑ, 310 килограмм горючи перекетленӗ.

102. **А. Григорьева** — Вӑрмар МТС-ӗнчи трактористка. СТЗ маркӑллӑ тракторпа ӗҫлесе, вӑл ҫуракинче планра кӑтартса панӑ 60 гектар вырӑнне 158 гектар сухаланӑ, плана 263 процент тултарнӑ, 85 килограмм горючи перекетленӗ.

103. **Екатерина Рускова** — Вӑрмар МТС-ӗнчи трактористка. У—2 маркӑллӑ тракторпа ӗҫлесе, вӑл ҫурхи ӗҫсен планне 233 процент тултарнӑ. Вӑл планра кӑтартса панӑ 30 гектар вырӑнне 70,42 гектар сухаланӑ, 86 килограмм горючи перекетленӗ.

104. **Ирина Онуфриева** — Вӑрмар МТС-ӗнчи трактористка. У—2 маркӑллӑ тракторпа ӗҫлесе, вӑл ҫуракинче 75,28 гектар сухаланӑ, плана 250 процент тултарнӑ, 65 килограмм горючи перекетленӗ.

105. **М. Архипова** — Вӑрмар МТС-ӗнчи трактористка. СТЗ маркӑллӑ тракторпа ӗҫлесе, вӑл ҫуракинче планра кӑтартса панӑ 60 гектар вырӑнне 115 гектар сухаланӑ, плана 191 процент тултарнӑ, 114 килограмм горючи перекетленӗ.

106. **Мария Степанова** — Елчӗк МТС-ӗнчи трактористка. СХТЗ маркӑллӑ тракторпа ӗҫлесе, вӑл ҫуракинче планра кӑтартса панӑ 62,5 гектар вырӑнне 116,29 гектар сухаланӑ, плана 170 процент тултарнӑ, 297 килограмм горючи перекетленӗ.

107. **Мария Сопкина** — Кувакино МТС-ӗнчи трактористка. Вӑл, СХТЗ маркӑллӑ тракторпа ӗҫлесе, планра кӑтартса панӑ 69 гектар вырӑнне 103 гектар сухаланӑ, ҫурхи ӗҫсен планне 150 процент тултарнӑ, 470 килограмм горючи перекетленӗ.

108. **Агрипина Терентьева** — Йӗпреҫ МТС-ӗнчи трактористка. У—2 маркӑллӑ тракторпа ӗҫлесе, вӑл планра кӑтартса панӑ 25,5 гектар вырӑнне 71,36 гектар сухаланӑ, ҫурхи ӗҫсен планне 246 процент тултарнӑ.

РЕСПУБЛИКӐРИ УЙХИРСЕНЧЕ

Шкул ачисен ӗҫ отрячӗсем колхозсенче

Шӑхасан вӑтам шкулӗнче вӗренекенсемпе учительсем, вӗренӳ ҫулне ӑнӑҫлӑн вӗҫленӗ хыҫҫӑн, бригадӑсемпе звеносене организациленсе колхозсене ӗҫлеме тухрӗҫ. Кӑҫал пирӗн колхозсем вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек пысӑк тухӑҫлӑ тырпул ӳстереҫҫӗ. Ҫак ӗҫре колхозниксемпе колхозницӑсене шкул ачисен ҫарӗ пысӑк пулӑшу пама тивӗҫлӗ.

Шӑхасанти вӑтам шкулта вӗренекенсенчен пурӗ 24 звено тата 10 бригада организациленӗ. Вӗсене учительницӑсемпе учительсем ертсе пыраҫҫӗ. Халӗ Шӑхасанти «Хӗрлӗ Октябрь» колхозӑн уйхир ӗҫ бригадисенче 150 вӗренекен, пахча-ҫимӗҫ бригадинче 19 вӗренекен ача ӗҫлет. Шкул ачисен бригадисене колхоз правленийӗ колхозниксен бригадисем ҫумне ҫирӗплетнӗ. Ачасен бригадисене А. Соловьева, Ф. Алексеев, Ю. Степанова, К. Налимов тата Морозова учительсем ертсе пыраҫҫӗ.

Шкул ачисем ӗҫре пысӑк пултарулӑхпа, хастарлӑхпа ӗҫлеҫҫӗ. Нумай бригадӑсем халӗ тырӑсене ҫумкурӑксенчен тасатаҫҫӗ, пахча-ҫимӗҫсене шӑвараҫҫӗ, калчасене апатлантарас ӗҫе те тата тислӗк тӑкас ӗҫе те хутшӑнаҫҫӗ.

А. ОРЛОВ.

Вӗренӳ ҫулӗ пуҫланиччен 100 ӗҫкунӗ тума тӑрӑшаҫҫӗ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Кармалти «Звезда» колхозри пионерсем колхоз производствинче маттур ӗҫлеҫҫӗ. Ҫитес вӗренӳ ҫулӗ пуҫланиччен вӗсем колхозӑн уйхирӗсенче куллен активлӑн ӗҫлесе 100-шер ӗҫкунӗ ӗҫлесе тума тӑрӑшаҫҫӗ. Паянхи куна ҫамрӑк ачасем В. Смирнов 60 ӗҫкунӗ, Н. Пчельников 45 ӗҫкунӗ, В. Димитров 40 ӗҫкунӗ, Г. Смирнов 30 ӗҫкунӗ, В. Брагин 20 ӗҫкунӗ ӗҫлесе тунӑ.

В. ТРОФИМОВ.

Ирхи ҫӗртмене ӑнӑҫлӑн вӗҫлерӗ

КУКЕҪ, июнӗн 9-мӗш. Ҫуртыррисемпе пахча-ҫимӗҫсене лартса пӗтернӗ хыҫҫӑнах Соснавкӑри «14 лет Октября» колхоз ирхи ҫӗртме сухине тума тытӑннӑ. Ку ӗҫе колхоз 4 ӗҫкунӗ хушшинче ӑнӑҫлӑн туса ҫитерчӗ. Уя 350 лав тислӗк кӑларчӗ. Ҫӗртме сухинче Чуварова, Кузьмина, Калинина колхозницӑсем кулленех нормӑна ирттерсе пурнӑҫласа пычӗҫ.

Халӗ колхозниксемпе колхозницӑсем ҫум ҫумлас ӗҫре хӗрӳллӗн ӗҫлеҫҫӗ.

М. СМЕТАНИН.

Тислӗк кӑлараҫҫӗ

СЕНТЕРВАРРИ. **(Телефонпа).** Астакассинчи «Большевик» колхоз ирхи ҫӗртме сухине туса пӗтерчӗ. Пурӗ 75 гектар сухаланӑ, вӑл вырӑна 1800 лав тислӗк кӑларнӑ. Районри ытти колхозсем те ирхи ҫӗртме сухине ӑнӑҫлӑн туса пыраҫҫӗ.

Шуркассинчи Киров ячӗпе тӑракан колхоз ҫӗртме пуссине 1800 лав тислӗк кӑларнӑ, 10 гектар сухаланӑ. Ҫавӑн пекех Кушникӑвӑри «Волна», Турри Магаҫри «Малалла» колхозсенче те ҫӗртме сухине тӑвас ӗҫ хӗрӳллӗн пырать. Нумай колхозсем хирсене тислӗк турттараҫҫӗ.

Ҫум ҫумлаҫҫӗ

ШАХАСАН. Ҫӗнӗ Пинерти колхоз вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешет. Колхозниксем ҫум ҫумлаҫҫӗ. Паянхи куна 30 гектар ҫинчи сӗлле, 20 гектар ҫинчи тулла тата кок-сагыз акнӑ пусса ҫумкурӑксенчен тасатнӑ. Ӗҫе колхозниксем активлӑн хутшӑнаҫҫӗ тата пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлеҫҫӗ. М. Трофимова, М. Шалова колхозницӑсем ӗҫ нормине 150—200 проц. таран тултараҫҫӗ.

Выльӑх-чӗрлӗх витисем тӑвакансен курсӗ

СЕНТЕРВАРРИ. Ҫак кунсенче Шуркассинче, Шуршӑлта тата Сӗнтӗрварринче колхозсен выльӑхӗсем валли вырӑнти материалсенчен витесем тума вӗрентекен кӗске срокла курссем пулса иртрӗҫ. Вӑл курссенче таврари колхозсенчи ҫуртйӗр строительствинче ӗҫлекен колхозниксем вӗренчӗҫ. Курссене райҫӗрӗҫ пайӗн техник-строителӗ Андреев юлташ ертсе пычӗ.

А. РАЗИН.

Кӗтӳ ирех хире тухать

ЕТӖРНЕ. Колхоз производствинче кашни колхозница вӑхӑтра туллин усӑ курса ӗҫлетӗр тесен, вӗсене ӗҫӗн условийӗсене туса памалла. Ҫакӑнта выльӑхсен кӗтӗвне ир-ирех уя кӑларни пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

Айкӑшри Киров ячӗпе тӑракан колхоз выльӑх-чӗрлӗхсен кӗтӗвне хире ир-ирех кӑлармалла турӗ. Кӗтӳ ҫӳреме уйрӑм участоксем уйӑрса пачӗ. Кӗтӳ пӑхакан И. Самолетов юлташ, колхозницӑсен ыйтӑвне хисеплесе, выльӑхсене хӗвел тухнӑ-тухманах уя илсе тухать, вӗсене лайӑххрах пӑхма тӑрӑшать. Куншӑн ӑна ӗҫчен колхозницӑсем юратаҫҫӗ.

К. МАТВЕЕВ.

ГОСУДАРСТВӐНА ТЫРӐ ПАРАҪҪӖ

ИШЛЕЙ, июнӗн 10-мӗш. **(Телефонпа).** Ачакассинчи «Коммунист» колхоз июнӗн 9-мӗшӗнче 10 лавлӑ хӗрлӗ обоз организацилесе, государствӑна 1942 ҫулхи обязательство шучӗпе 200 пӑт тӗштырӑ леҫсе пачӗ.

П. РЫКОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 11-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

20 çăрмасене, 100 лашине [illegible] тата икĕ зенитлă батарейăне пĕтерсе тăкнă.

Гвардейски чаçĕн минометчикĕсем (Калинин фрончĕ) темиçе кун хушшинче нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 14 пулеметне, минометсен 3 батарейине пĕтерсе тăкнă, [illegible] урлă касмалли кĕпере çĕмĕрнĕ.

* * *

Çавăрăк снайпер Лекачев юлташ ([illegible] юлташ командир пулса тăракан часть) 3 кун хушшинче 13 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Орел облаçĕн [illegible] Т. [illegible] пулса ертсе пыракан отрячĕ çĕрле нимĕçсен Д. ялĕнчи полици отрячĕпе çар подразделенине сине пырса тапăннă. Партизансем 36 гитлеровеца вĕлернĕ. [illegible] тарса сапаланнă. Çав вăхăтра ял [illegible] тата 40 гитлеровеца пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсен 56-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 171-мĕш полкăн 2-мĕш ротинчи тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Франц Шафнер çапла каласа панă: «1942 çулти февраль тĕлне пирĕн рота пĕтĕмпех çĕнелнĕ. Россияна хирĕç поход пуçласа янисем ĕнтĕ çĕр айĕнче выртаççĕ, е инвалид пулса тăнă. Кăçал пирĕн ротăна виçĕ хутчен çынсем хушса панă. Хальхи вăхăтра салтаксем ялан ах укрепленисем тăвас ĕçре ĕçлеççĕ. Нимĕç çарĕ [illegible] Россияна [illegible] укреплени [illegible] фронтран тарса кайнă, тенĕ. [illegible]

* * *

Нимĕç фельдфебелĕ Альфред Глиб [illegible] хăйĕн тăванĕсем патне çапла çырнă: «Ровно станцийĕ икĕ поезд пĕр-пĕрне перĕннĕ. Бензин тултарнă цистернăсен составĕ çар поезд-не пырса çапăннă. [illegible] каласа пачĕ».

* * *

Итали халăхĕ нимĕçсене, хăйсене Италире çĕнтерсе илнĕ çĕршывра тыткаланă пек тыткаланаксерсене, кураймасть. Çак кунсенче Венецире нимĕç офицерĕ пĕр аманнă итальянец салтакне честь паманшăн çапнă. Пухăннă çынсем вара çав гитлеровеца хĕнесе тăкнă.

Севастопольри çынсен паттăр ĕçĕсем

СЕВАСТОПОЛЬ, июнĕн 9-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Хула-герой хăйне фашистла ирсĕрсенчен пысăк паттăрлăхпа хӳтĕлет. Севастополь çине сывлăшран пырса тапăннисем тăшмана хакла лараççĕ. Темиçе кун хушшинче хула çийĕнче противникăн 26 самолетне персе ӳкернĕ. Летчик-черноморецсем нимĕçсен аэродромĕ çинче 11 самолета çунтарса янă. Пирĕн оборонăн малти хĕрринче винтовкăран персех пĕр «Массершмитт» ӳкернĕ.

Нимĕçсен тыткăна лекнĕ летчикĕ Гельмус Вундерлис çапла каласа панă: Севастополь патнелле вĕçсе кайнă чухне гитлерла летчиксенчен никам та каялла таврăнăп тесе шутламасть.

Нимĕçсен оккупанчĕсене Севастопольри артиллеристсем пысăк сиен кӳреççĕ. Юлашки кунсенче вĕсем противникăн пехота турттарса пыракан 12 грузовикне, 2 çăмăл машинине, пĕр орудине тата 500 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн летчиксемпе штурмовиксем те тăшмана питĕ пысăк сиен кӳреççĕ. Ефимов, Володин, Кравцов штурмовиксем темиçе хут вĕçсе кайса пехотăпа грузсем турттарса пыракан 25 машинăна, 50 лава, 2 кухняна пĕтерсе тăкнă.

М. ТУРОВСКИЙ.

Смоленск облаçĕн оккупациленĕ районĕсенче фашистсем тăвакан тискер ĕçсем

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, июнĕн 8-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Противник тылĕнчен килнĕ партизансем Смоленск облаçĕн вăхăтлăха нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенче фашистла террор сарăлни çинчен каласа параççĕ.

Кашни кун тенĕ пекех карательнăй отрядсем ялсене пырса кĕреççĕ те чи малтан тĕл пулнă пӳртсенех вут тивертсе çунтараççĕ, хресченсене асаплантараççĕ, пĕр айăпсăр çынсене, ачасемпе стариксене те хĕрхенсе тăмасăр, нумайĕшне персе вĕлереççĕ.

Лишиница ялĕнче вĕсем хресченсен 20 çуртне вут тивертсе çунтарса янă тата 12 çулти ачасенчен пуçласа 80 çула çитнисем таран 270 çынна персе вĕлернĕ. Демидово ялĕнче гестаповецсем кам çинчен вĕсем партизансене пулăшса тăраççĕ пуль тесе шухăшланă, çавсене пурне те чĕрĕллех çĕр айне пытарнă.

Допрос тунă чухне фашистла карательсем питех те тискеррĕн асаплантараççĕ. Тĕпчене чухне вĕсем çынна пичкене пуçхĕрлĕ яраççĕ, телеграф пралукĕпе ăнран яричченех хĕнеççĕ, çыннăн аллисене хуçаççĕ, куçĕсене чиксе шăтараççĕ, хăлхисене касса илеççĕ, çавăн пек асаплантарнă хыççăн персе вĕлереççĕ.

Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту

Хĕрлĕ ялавлă цех

Станоксем пĕр тикĕс ĕçлеççĕ. Цех начальникĕ Токарев юлташ, яланхи йăлапа, станочниксем мĕнле ĕçленине тĕрĕслет. Кун каçа вăл кашни станочник патне çитме ĕлкĕрет: вĕсен ĕçне сăнать, пулăшу парать. Акă вăл Черный юлташăн станокĕ епле ĕçленине итлесе тăрать.

Ĕнерхи сменăра Черный юлташ пĕччен виçĕ çыншăн ĕçленĕ. Унăн тантăшĕ — Савченко юлташ та ĕç нормине 300 процента яхăн тултарнă. Цехра халĕ пурте нихăçан пулман çĕкленӳпе, ĕç нормисене ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ.

Сталин юлташăн приказне пурнăçлама мобилизациленнĕ цех коллективĕ май уйăхĕнчи производство планне 28 кун хушшинче 105 процент тултарса, заводри пур цехсенчен мала тухнă, куçса çӳрекен хĕрлĕ ялава илнĕ.

— Ку вăл пирĕн коллектив графика кулленех çирĕп пурнăçласа пынинчен килет. Ĕç вырăнĕсемпе инструментсене эпир малтанах хатĕрлесе хуратпăр, оборудованисене каннă вăхăтра е ĕçе тытăнас умĕн юсатпăр, кашни станочника куллен заданисем парса тухатпăр, станоксене тулли ĕçлеттеретпĕр, — каласа парать цех начальникĕ Токарев юлташ.

Çаксене тунă май, рабочисен ĕç тухăçлăхĕ палăрмаллах ӳснĕ. Иртнĕ уйăхра цехри кашни рабочи вăтамран иккĕшер норма тултарса ĕçленĕ. Юлашки уйăх хушшинче çĕнĕрен 15 стахановец хутшăннă. Бельский, Черный, Агеев, Савченко, Ковалев тата Некрасов стахановецсем виççĕшер норма тултаракан пулнă.

Смена начальникĕ Ямпольский, мастерсем Черняковпа Филиппов юлташсем график пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине тата кашни рабочи мĕнле ĕçленине тĕрĕслесех тăраççĕ.

Цехра малта пыракансен ĕç опытне анлăн сараççĕ. Кашни вунăкунлăхра канашлу пухса, производствăллă ыйтусене сӳтсе-яваççĕ. Рабочисем хăйсен ĕç тухăçлăхне ӳстермелли майсем çинчен тухса калаçаççĕ, кирлĕ сĕнӳсем параççĕ.

* * *

Паян ĕç пĕтнĕ хыççăн заводра митинг пулса иртнĕ. Унта май уйăхĕнче мала тухнă Токарев юлташăн цехне, Марков юлташăн сменине тата Капелюха юлташăн бригадине куçса çӳрекен хĕрлĕ ялав пачĕç. Токарев юлташ ялава алла илсе, завод коллективне çапла шантарчĕ:

— Эпир иртнĕ уйăхра ăмăртура мала тухрăмăр, хĕрлĕ ялав илме тивĕçлĕ пултăмăр. Çак хисеп пире июнь уйăхĕнче тата лайăхрах ĕçлеме хушать. Эпир иккĕмĕш кварталти производство планне 8 кун маларах тултарма пулатпăр. Куçса çӳрекен хĕрлĕ ялава хамăр алăран вĕçертместпĕр.

Июнĕн малтанхи вунăкунлăхĕнче те çак цех малта пырать.

П. НИКОЛАЕВ.

КАНАШ, ВРЗ, июнĕн 10-мĕш. (Телефонпа).

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнтăмăр

Куславккари ФЗО шкулĕнче вĕренекенсемпе ĕçлекенсем ремесло училищисемпе чугунçул училищисен тата фабрикăпа завод ĕçĕсене вĕренмелли шкулсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне хутшăнчĕç. Ăмăртун Ĕç Резервĕсен Главнăй Управленийĕпе ВЛКСМ Центральный Комитечĕ туса çирĕплетнĕ условийĕсем çинчен шкулта вĕренекенсемпе ĕçлекенсен пухăвĕнче сӳтсе-явнă. Ун хыççăн группăпа группа, вĕренекенпе вĕренекен хушшинче социализмлă ăмăрту договорĕсем тунă. Уйрăм вĕренекенсем тата группăсем договора мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслеме виçшер çынран «тройкăсем» уйăрнă. Ăмăртура мала тухнă группăна пама шкулта куçса çӳрекен ялав тунă. Тройка май уйăхĕнче группăсем договора мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тухрĕ. Викторов юлташ мастер пулса ĕçлекен 6-мĕш группа куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава илме тивĕçлĕ пулчĕ. Ахматуллин, Георгиев, Иванов, Хысанов юлташсем отлично вĕренеççĕ, производствăра нормăна ытлашшипех тултараççĕ. Вĕсем вĕренӳре те, ĕçре те пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ.

В. СУРИКОВ,
ФЗО шкулĕн директорĕ.

Çамрăк рабочисем ăнăçлă ĕçлеççĕ

СЕНТĔРВĂРРИ. Отечественнăй аслă вăрçă пирĕн промышленность умне пысăк та ответлă задачăсем лартрĕ. Халĕ заводсемпе артельсем фронт заказĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе ытларах ĕçлеççĕ. Унпа пĕрлех вĕсем ĕççыннисем валли кулленхи кирлĕ таварсене туса кăлараççĕ.

Районри промысла комбиначĕ, тĕпрен илсен, урапа çунасем юсать тата вĕсене çĕнĕрен тăвать. Çав вăхăтрах хуçалăхра кирлĕ япаласене: çĕтелсем, пукансем, витресем, тазсем, кĕреплесем, мотыксем, пуртăсем тăвас тĕлĕшпе ĕçлет. Час-часах васкавлă заказсене пурнăçлать. Çак ĕçсене вăхăтра тата лайăх тума квалификациллĕ рабочисем кирлĕ. Рабочисенчен пĕр пайĕ тăван çĕршыва сыхлама кайрĕ. Вĕсен вырăнне çамрăксене вĕрентсе хатĕрлесси предприятисен пысăк задачи пулса тăрать. Районри чылай предприятисем çав задачăна ăнăçлăн пурнăçларĕç. Су заводĕнче пĕтĕмпех хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Çĕнĕ работницăсенчен чылайĕшсем хăйсен нормисене ытлашшипех тултараççĕ. Судоверфьра ĕçлекен Турличкина, Яковлева, Попова, Маркова юлташсем кулленхи нормăсене 150-шар процент, çĕвĕ мастерскойĕнче ĕçлекен Заикина, Покровская, Лукина юлташсем 250-шар процент тултараççĕ. Çавăн пекех «Портной» артельри Сорокина, Владимирова, Лебедева, Гордеева, Иванова тата Просвирнина çĕвĕçсем те хăйсен нормисене пĕрмаях 200 процент тултарса пыраççĕ.

Судоверфьри рабочисем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайнă. Унăн цехĕсенчен виççĕшĕ пĕрремĕш квартал планне вăтамран 120-шер процент тултарнă. Васкавлă заказсене пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлесе, рабочисенчен чылайĕшĕ двухсотниксемпе трехсотниксен ретне тăраççĕ. Войнов, Муравьев юлташсем заданисене 250-шар процент, Сивов, Краличкин юлташсем 230-шар процент тултараççĕ. Фронта кайнă плотниксен вырăнĕнче вĕсен ывăлĕсем 17 ача ĕçлеççĕ. Вĕсенчен 9-шĕ халĕ квалификациллĕ плотниксем шутланаççĕ.

Çĕршыв оборонине тĕреклетес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленĕшĕн Юханшывсен Халăх Комиссариачĕ Судоверфь коллективне тав тунă тата унăн малта пыракан работникĕсене премиленĕ.

А. РАЗИН.

Совет воинĕн чапĕ вилĕмсĕр

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 10-мĕш. (ТАСС). Швецири «Гетебортс постен» хаçат умстатьяра çапла çырать: «Гитлер çарĕсем СССР çине тапăннăран вара вырăссем тăшмана хирĕç геройла кĕрешнипе хăйсене мĕнпур тĕнчере хисеплемелле турĕç». «Паян, — тесе çырать хаçат, — совет салтакĕсен хастарлăхĕ, нимрен хăраманлăхĕ, вĕсем çапăçма лайăх пĕлни çинчен пурте хавасланса калаçаççĕ. Совет хĕçпăшалĕ те йышлă тата пысăк пахалăхлă пулнине пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерчĕ. Çавна нимĕçсем те пытарса тăма пултараймаççĕ. Вĕсем çапăçăва тухма пур енчен те хĕçпăшаланса çитнĕ халăха хăйсене хĕрхенме ыйтман тата хăйсем те тăшмана хĕрхенсе тăман халăха тĕл пулчĕç.

Хăйсем тыткăна лексен вĕсене персе пăрахассине питех те лайăх пĕлсе тăраççĕ пулсан та, вырăс партизанĕсем нимĕçсене пĕр минутăлăх та канăç памаççĕ. Германие хирĕç пыракан вăрçăра тăван çĕршыва сыхлакан вырăс салтакĕ мухтава тивĕçлĕ, ун çинчен хавасланса каласа парĕç. Россияна тата тĕнчери чи лайăх обществăллă йĕрке вырăнне шутласа тăвакан йĕркене сыхласа хăварассишĕн вăл нимрен хăрамасăр çапăçать».

Гитлерла мерзавецсен çав тери тискер преступленийĕ

Нимĕçсем отравляющи веществосем сиенленине сăнаса пĕлме советăн тыткăна лекнĕ çар çыннийĕсемпе усă кураççĕ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 10-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентстви хăйĕн Цюрихри корреспонденчĕ гитлерла мерзавецсен çав тери тискер çĕнĕ преступленийĕсем çинчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Цюрихре илнĕ шанчăклă сведенисем тăрăх, нимĕçсем Псковра тата ытти хăшпĕр хуласенче опыт тумалли пунктсем уçнă, çав пунктсенче отравляющи веществосем мĕнле сиенленине сăнаса пĕлес ĕçре нимĕçсем тыткăнри вырăс салтакĕсемпе усă кураççĕ.

Гитлерла оккупантсем юхăнчăклăх, выçлăх тата вилĕм акаççĕ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 10-мĕш. (ТАСС). Швеци хаçачĕн корреспонденчĕ Харьковран çапла çырать: «Украинăн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенче халăхăн хăй валли апат-çимĕç ăçта май килнĕ çавăнта, мĕнле май килнĕ çавăн пек тупма тивет. Харьков урамĕсенче шурса кайнă, вăйсăрланса çитнĕ ачасем çӳреççĕ, вĕсенчен ĕнтĕ халăх выçлăхпа аптăраса тем тĕрлĕ хĕнхур курса пурăнни курăнать. Хулари халăх апат-çимĕç шырама ялсене йышлăн каять. Нимĕçсем слекуляци тăваççĕ. Апат-çимĕç питех те хаклă. Хулари транспорта ĕçе яман. Водопровод ĕçлемест».

Гитлерла хаçатсем хăйсем те оккупантсем хуçаланнă хыççăн нимĕн те юлманни çинчен намăса пĕлмесĕр, уççăнах сыраççĕ. «Дейче альгемейне Цейтунг» çапла çырать: Донбасăн оккупациленĕ районĕсенче çуçалăхри пурнăç арканса кайнă: пасарсем ытла та япăх. Вĕсенче тутăхнă пăтасем, çĕтĕк-çатăксем, çĕтĕк кĕнекесем, кивĕ кастрюльăсем, кивĕ граммофон пластинкисем кăна сутаççĕ. Карчăксем венчет çĕррисене сутаççĕ». Гитлерла тепĕр хаçат Житомир хулинче электричество, шыв, вутă çукки çинчен, çуртсенчен нумайĕшĕсенчен ишĕлчĕк кăна тăрса юлни çинчен пĕлтерет.

Гитлеровецсем колхозниксене çĕр çинчен хăвала-хăвала яраççĕ, вĕсене Германи «колонисчĕсен» тата помещикĕсен крепостнои çыннисем туса хураççĕ.

Кельн хулине çĕнĕрен тумалла пулать

Гитлер хаçачĕ йышăнни

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 10-мĕш. (ТАСС). «Вест дейчер беобахтер» ятлă гитлерла хаçатра Англи авиацийĕ Кельн хули çине тапăннипе çав хула нумай ишĕлни çинчен калакан статья пичетленĕ. «Киле чулсен куписем урлă таврăнатăп, — тесе çырать çав статьян авторĕ.—Кельнри çуртсене вут-çулăм хыпса илнĕ. Çуртсем арканнă вырăнсенче те çулăм ялкăшать. Мĕн ишĕлнине çĕнĕрен юсаса лартма çук ĕнтĕ. Кельн хулине çĕнĕрен тума тивет. Пур кварталсенче те вут тивертекен тата фугаслă бомбăсем урамĕ-урамĕпех пĕтерсе тăкнă. Тепĕр каçхине каллех самолетсем тапăнни çинчен пĕлтерсен, эпĕ пушарсене сӳнтерне çĕрте ĕçлерĕм. Хĕрарăмсемпе арçынсем витресемпе шыв çĕклерĕç, мĕншĕн тесен водопровод арканнă. Çынсем урамрах пурăнаççĕ. Пиншер çынсем япаласен сыххисене йăтса е чемодансене ачапăча урапасем çинче турттарса урамсем тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳреççĕ.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче уйăхне 5.000 самолет тăваççĕ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 10-мĕш. (ТАСС). Сенатăн вăрçă валли укçа-тенкĕ уйăрса парас ыйтусене пăхса тухакан комиссийĕн председателĕ сенатор Томас çапла пĕлтернĕ: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче хальхи вăхăтра уйăхне 5.000 самолета яхăн туса кăлараççĕ. «Çитес çулта эпир Рузвельт палăртнă иккĕмĕш тĕллеве, уйăхне 10.000 самолет туса кăларассине пурнăçа кĕртетпĕр», тесе каланă вăл.

Черчилль общинăсен палатинче тунă заявлени

ЛОНДОН, июнĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: ĕнер общинăсен палатинче тухса каласа, Черчилль хăйĕн ячĕпе тата Рузвельт ячĕпе çакăн пек заявлени тунă: вăрçа ăнăçлăн туса ирттермешкĕн Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Англин пĕрлештернĕ ресурсĕсемпе лайăхрах усă курас тесе, производствăпа ресурссен пĕрлешӳллĕ комитечĕ тата апат-çимĕçсен пĕрлешӳллĕ комитечĕ тунă, тенĕ.

Пĕлтерӳ

Июнĕн 13-мĕшĕнче каçхине 8 сехетре лекци пулать. Лекцин теми:

Хальхи лару-тăру çинчен.

Лекцие ЦК ВКП(б) лекторĕ **Сосновский** юлташ вулать.

Билетсене парторганизацисен секретарĕсен е вĕсем хушнă çынсен июнĕн 13-мĕшĕнче ВКП(б) хула комитечĕн пропагандăпа агитаци пайĕнче (123-мĕш номерлĕ пӳлĕмре) илмелле.

ВКП(б) Хула Комитечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Сывлăшран тапăннинчен сыхланас ĕçе лайăх организацилер

Совет халăхĕ нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç вуниккĕмĕш уйăх кĕрешет. Пирĕн Хĕрлĕ Çар тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçать, унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пырать. Совет çыннисем предприятисенче, колхозсемпе совхозсенче кунĕн-çĕрĕн тимлĕн ĕçлеççĕ, фронт мĕн ыйтнине йăлтах çителĕклĕ парса тăма тăрăшаççĕ. Совет çĕршывĕ пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ пулса тăчĕ. Нимĕç мерзавецĕсем сывлăшран тапăнма хăтланнисене совет çыннисем вăхăтра сирсе ярса пыраççĕ.

Сывлăшран тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланас ĕçе граждансене пурне те вĕрентесси çинчен СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ постановленин йышăннăранпа пирĕн Чăваш республикинчи вуншар пин граждансем ПВХО ĕçне вĕренчĕç. Чкаловски, Ишлей, Первомайски, Куславкка, Шупашкар, Елчĕк тата Тăвай районĕсенче сывлăшран тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма пур граждансене те вĕрентнĕ. Нумай районсенче халăха ПВХО ĕçне вĕрентесси анлăн сарăлнă. Обществăллă инструкторсем, активистсем ПВХО правилисене вĕрентекен кружоксенче юратса ĕçлеççĕ. Тăвай районĕнчи инструктор Шичуров юлташ 256 çынна, Шупашкар хулинчи инструктор Сапожников юлташ—200 çынна, Чкаловски районри инструктор Прокопьев юлташ 286 çынна ПВХО ĕçне вĕрентнĕ.

Анчах Шăмăршă, Çĕрпӳ тата Етĕрне районĕсенче граждансене пурне те ПВХО ĕçне вĕрентессине вăраххăн туса пыраççĕ. СССР Совнаркомĕн постановленийĕ тухсанах Çĕрпӳ районĕнче ку ĕçе лайăх тытăннăччĕ. Пăртак вăхăт иртсен, районри партипе совет организацийĕсем çак ĕç çинчен манса кайнă. Çавна пула 1941 çулти октябрь уйăхĕнчен пуçласа паянхи кунччен те ПВХО нормисене пама пĕр çынна та вĕрентсе хатĕрлемен. Паллах, çавăн пек тимсĕрлĕхе тӳсме çук. Пур граждансене те ПВХО ĕçне вĕрентсе çитерессине чи кĕске срокра туса пĕтермелле. Осоавиахимăн райсовечĕсемпе пуçламĕш организацийĕсен халăха ПВХО ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе фронтри пек, çарти пек ĕçлес пулать. Ку ĕçре обществăллă инструкторсемпе пуринпе те усă курмалла. Халăха ПВХО ĕçне вĕрентесси—ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен умĕнче тăракан пысăк задача. Çак задачăна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе яланах ĕçлес пулать.

Сывлăшран тапăннинчен сыхланма кашни гражданин пĕлмелле. Вут тивертекен бомбăсене сӳнтерме пĕлни питех те кирлĕ. Мĕншĕн тесен тăшман пĕрахнă бомбăсене вăхăтра сӳнтерни пушар тухса сарăлассине çийĕнчех чарса лартма май парать. Хĕскĕчпе, кĕреçепе, савукпа усă курса, вут тивертекен бомбăна çуртран кăларса ывăтма, шыв сапса, хăйăрпа витсе сӳнтерме вĕрентмелле. Хальхи вăхăтри пожарнăй дружинăсен йышĕсене пысăклатмалла. Пушара хирĕç кĕрешекен командăсенче комсомолецсен взвочĕсене тусан аван пулмалла. Кашни предприятирех, кашни хуларах, кашни ялтах çуртсен таврашĕсене ăпăр-тапăрсенчен тасатмалла. Вут час хыпса илме пултаракан çӳп-çапсене çуртсен маччисем çинчен антармалла. Пушара хирĕç кĕрешмелли хатĕрсем пур енчен те юсавлă пулмалла. Кашни çурт çывăхĕнчех шывлă тата хăйăрлă катка-пичке лармалла.

Химиллĕ тапăнуран сыхланас ĕçе лайăх вĕренсе çитмелле. Кашни гражданинăн газсем мĕнлине, хăш отравляющи вещество мĕнле сиен кӳнине, вĕсене хирĕç мĕнле кĕрешмеллине пĕлес пулать. Химиллĕ тапăнуран сыхланнă чухне кирлĕ хатĕрсене яланах юсавлă усрамалла. Газран пытанмалли вырăнсене (газоубежищĕсене), химиллĕ тапăну хыççăн сиенленнĕ вырăна тасатма дегазаци камерисене тата станцийĕсене хатĕрлес пулать.

Противогазпа усă курма кашни çынăн [illegible] че час-часах тренировкăсем туса ирттермелле. Противогазпа çӳремелли походсем организацилемелле, çав походсене ĕççыннисен йышлă массисене хутшăнтармалла.

1941 çулта кĕркунне щельсем тăвас ĕç анлăн сарăлнăччĕ, чылай çĕрте вĕсене тунăччĕ. Анчах, кӳренмелле те, çав щельсене йĕркеллĕ тытса усрасси çин çавăрăнса пăхман пирки вĕсенчен хăшпĕрисем йăтăнса аннă, вĕсен ăшне шыв тулнă. Щельсемпе убежищĕсене пурне те юсаса çитермелле, çĕнĕрен тумалла, вĕсене лайăх пăхса усрамалла.

Светомаскировка çинчен пĕр-ик сăмах. Хуласемпе ялсенче çĕрле ниçта та çутă курăнмалла мар, вĕсене тĕплĕ тĕттĕмлетни кирлĕ. Анчах хăшпĕр çынсем светомаскировка правилисене пăснисем пулкалать-ха. Кун пек йĕркесĕрлĕхе тӳсме çук, мĕншĕн тесен чӳречерен пĕртак çеç çутă курăннипех тăшман хулана е яла тупса, ун çине сывлăшран тапăнма пултарать. Кашни хуларах, кашни ялтах светомаскировка правилисене пăхăннине хытă тĕрĕслесе тăрас пулать. Светомаскировкăшăн предприяти, учреждени, колхоз руководителĕ, çурт коменданчĕ, квартал комитечĕн председателĕ ответлă. Кашни çын хăйĕн çуртне, пӳлĕмне лайăх тĕттĕмлетме тивĕçлĕ. Светомаскировка правилисене пăсакан çынсене çирĕп ответ тыттарас пулать. Хуласенче, ялсенче, предприятисенче, колхозсенче, халăх пурăнакан çуртсенче кашнинчех самозащита групписем пулмалла. Çав группăра тăракан кашни çын хăйĕн обязанноçĕсене пурнăçа кĕртме лайăх хатĕрленсе çитмелле. Самозащита группинчен валли кирлĕ хатĕрсене вăхăтра тăвас пулать.

Сывлăшран тапăннинчен сыхланас тĕлĕшпе мĕнпур ĕçсене лайăхлатса пымалла. Сывлăшран тапăннинчен сыхланас ĕçĕн (МПВО) штабĕсем питех те оперативлă тата тĕрĕс ĕçлесе тăмалла. Штабра, наблюдательнăй пунктсенче талăкĕпех дежурнăйсем тăмалла.

Çапла вара, сывлăшран тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланас ĕçре çарти пек çирĕп йĕрке, çирĕп дисциплина туса çитерес пулать. Государствăн çак пысăк ĕçне пурнăça кĕртессишĕн кĕрешнĕ çĕрте коммунистсемпе комсомолецсем малти ретсенче пымалла.

А. РЯБОВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ.

Наркомат местной промышленности Чувашской АССР с глубоким прискорбием сообщает о смерти директора чулочной фабрики
КОРОБОВА
Исаака Зельмановича
и выражает соболезнование семье покойного.

Коллектив рабочих, ИТР и служащих Чебоксарской государственной чулочной фабрики выражает соболезнование семье Коробова по поводу преждевременной смерти директора фабрики
КОРОБОВА,
Исаака Зельмановича.

Парторганизация, ФЗК и администрация Чебоксарской государственной чулочной фабрики выражают глубокое соболезнование семье преждевременно умершего директора фабрики
КОРОБОВА,
Исаака Зельмановича.
Похороны состоятся в 16 часов 12 июня 1942 года.

Требуются на постоянную работу инспектора, агроном и бухгалтер-ревизор.
Обращаться: г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 10.

Бывшие рабочие и служащие Авторемонтного завода, неполучившие облигаций Госзайма 3-ей Пятилетки выпуска 4-го года, должны получить таковые в бухгалтерии завода не позднее 18 июня 1942 г.

МАРИИНСКО-ПОСАДСКИЙ ЛЕСОТЕХНИЧЕСКИЙ ТЕХНИКУМ
Объявляет осенний прием студентов на 1942—43 учебный год.
Техникум готовит: 1) техников-технологов по лесозаготовкам, 2) техников-лесхозяйственников, 3) техников по строительству, ремонту и эксплоатации лесовозных дорог.
К приему в техникум допускаются лица обоего пола в возрасте от 15 до 35 лет.
Срок обучения 3 года.
Порядок поступления и представления документов — общий для техникумов.
Окончившие 8 и 9 классы средней школы принимаются на II курс.
Прием заявлений производится с 1 июня сего года.
Начало занятий — 1 сентября.
Явившиеся в техникум должны предъявить паспорт или выписку из паспорта, без чего в приеме будет отказано.
Студенты обеспечиваются общежитием, постельными принадлежностями и питанием в студенческой столовой.
Техникум имеет: учебно-опытную лесную дачу, учебную автомашину, электростанцию, трактор, вполне оборудованные кабинеты, свою звуковую киноустановку, радиоузел и т. д.
Адрес: гор. Мариинский Посад, Чувашской АССР, Майская ул., дом № 30.
ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, [illegible] олодарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 165 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п. л.